Çĕр пайĕн ыйтăвĕсемпе

Вăхăтра ĕлкĕрес пулать

2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче çĕр пайĕ пур граждансен çĕр участокĕсене приватизацилемелли вăхăчĕ вĕçленет. Çĕр пайĕн харпăрлăхĕн свидетельстви вăл – ку участока уйрăм процедурăсем хыççăн харпăрлăха çирĕплетме право паракан документ.

Çĕр пайĕсене валеçессине пĕрлехи пухусенче татса панă, протоколсене ял тăрăхĕсенчи çĕр пайĕсен хуçисем, ял хуçалăх организацийĕсен администрацийĕсем алă пусса çирĕплетнĕ. Йышăнусенче çĕр пайĕ илме тивĕç çынсен списокĕсене, участоксем уйăрса памалли черете тата чи кирли – уйсене çирĕплетнине палăртнă. 101 № ФЗ Федераллă саккунăн 13-мĕш статйипе çĕр пайĕ шучĕпе уйăракан çĕр участокĕн вырăнне асăннă саккунăн 14-мĕш статйипе килĕшӳллĕн пĕрлехи пуху йышăнăвĕпе палăртаççĕ.

Çапла вара алăра çĕр пайĕ уйăрни пирки свидетельство пулсан участока пуху йышăнăвĕпе çирĕплетсе панă уйра кăна илме пулать. Ку вăл питех те палăрăмлă самант. Мĕншĕн тесен çĕр пайĕн хăш-пĕр хуçисем уйăрса панă вырăнта мар, урăх çĕрте çĕр участокĕсем илеççĕнни пирки пĕлтереççĕ. Çĕр пайĕсен хуçисен пĕрлехи пухăвĕн протоколĕсене Раççей куçман пурлăхăн Муркаш районĕнчи управленийĕнче çирĕплетмелле, кайран вĕсене регистраци палатинче регистрацилеççĕ.

Çĕр пайне уйăрасси пирки районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра пĕлтерӳ пичетлемелле пулать. Кайран межевани ĕçĕсене туса ирттермелле. Унăн хакĕ заявкăсем мĕн чухлĕ пулнинчен тата участок кăткăслăхĕнчен килет, вăтамран 1800–2800 тенкĕпе танлашать. Эпир вара межевани ĕçне май пуррипе вырăнти организацире туса ирттерме сĕннĕ пулăттăмăр, мĕншĕн тесен çакăн пек тĕслĕхсем те пур. Айккинчи организацисем укçине пуçтарнă, ĕçне вара пурнăçламан. Çĕр участокне кадастр палатинче регистрацилесе кадастр учетне тăратмалла, кадастр планне илмелле те пĕлтерӳ пичетленсе тухнă хыççăн 1 уйăх иртсен справкăсем патне Раççей куçман пурлăх управленине, хăвăрăн ял тăрăхне, район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайне пымалла. Регистраци палати çĕр участокне регистрацилессин ĕçне татса парать.

Çĕр пайĕн хуçи ăна пайпа тивĕçекен çĕр участокне уйăрса памасăрах хăйĕн ирĕкĕпе çĕр участокĕпе усă куракан ял хуçалăх организацийĕн устав капиталне хывма, çĕр пайĕн харпăрлăхĕнче тăракан тепĕр çынна, ял хуçалăх организацине, хреснен (фермер) хуçалăхне сутма е парнелеме, тепĕр çынна халаллама та пултарать. Çĕр участокĕпе хăй пĕлнĕ пек урăхларах майпа усă курас тесен вара ăна çĕр пайĕн шучĕпе ятарлă участока уйăрса пани кирлĕ.

Хăвăра интереслентерекен пур ыйтусемпе те вырăнсенчи ял тăрăхĕсене пыма сĕннĕ пулăттăм. Çавăн пекех кирлĕ информацие Раççей куçман пурлăхăн районти управленийĕнче тата район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕнче те илме пулать.

А. ПЕТРОВ,
район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ.

Акци иртет

Професси суйлама çăмăл мар

Професси тĕрĕс суйласа илесси - кашнин пурнăçĕнчех çивĕч ыйту. Çак суйлавран малаллахи пурнăç мĕнле пуласси килет-çке. Аслă классенче вĕренекенсемшĕн çак тапхăр уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Професси суйласа илме пулăшакан специалистсем сахал пулнă май пур шкул ачи те професси тĕнчи пирки туллин пĕлмест.

Çавăнпа та иртнĕ эрнере шкулсенчи директорсен воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсемпе соцпедагогсем семинара пуçтарăнчĕç. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ Т.В. Егорова тата Муркаш районĕнчи ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн аслă инспекторĕ Н.В.Волкова ачасене професси тĕрĕс суйлама пулăшассине вăйлатма сĕнчĕç.

Апрелĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшĕччен «Санăн професси суйлавĕ» ятпа акци пырать. Хăйсен ирĕкĕпе ĕçлекен профориентаторсем пулма учительсем те, библиотека ĕçченĕсем те, студентсем те пултараççĕ. Акци вăхăтĕнче кашни сыпăкра вĕренекен шкул ачисемпе тĕрлĕ ĕçсем туса ирттерме палăртнă. 1-4-мĕш классенче интереслĕ вăйăсем урлă ачасене профессисемпе паллаштармалла. Вăтам классенче вĕренекенсемпе тĕрлĕ хăнăхтарусем, аслă классенче вара консультацисем ирттермелле.

Професси суйласа илнĕ чухне паянхи куна çеç шута илни çителĕксĕр. Тепĕр темиçе çултан лару-тăру мĕнле пулассине те пăхмалла. Апла пулсан професси рынокĕ пирки те ачасене паянах каласа ăнлантармалла. Хăш специалистсен халĕ ĕç тупма йывăр, хăшĕсем çитмеççĕ тата мĕнле специалистсене ĕçе илме тăрăшаççĕ - çакна та шкул пĕтерекен çамрăксен лайăх пĕлмелле.

2020 çул тĕлне, экономика тишкерĕвĕсем тăрăх, ĕçлекенре чи малтанах ăс-тăн, творчествăлла ĕçленине тата коллективра килĕштерсе ĕçлеме пултарнине хаклĕç. Ĕçре сиксе тухакан ыйтусене хăй тĕллĕн татса пама пултаракансене хисеплени палăрĕ. Çавăнпа та ĕçре кирлĕ пулакан паха енсене мĕн ачаранах аталантарса пымалла.

Н.НИКОЛАЕВА.

Апрелĕн 19-мĕшĕ – Ĕçпе тивĕçтерекен службăна йĕркеленĕ кун

Ĕçлеме кайма кăмăл пур пулсан

Çынсене ĕçпе тивĕçтерекен районти центрăн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри ĕççĕррисене шута илесси кăна мар, вĕсене ĕç вырăнĕ тупса парасси, ĕçпе тивĕçтересси те пулса тăрать. Çавăнпа та асăннă центрăн ертӳçипе Тамара Афанасьевна АНТОНОВАПА тĕл пулнă май ку енĕпе центр туса ирттерекен ĕçсем пирки каласа пама ыйтрăм:

– Чăннипех те ĕççĕррисене юрăхлă ĕç тупса парас тесе чылай тăрăшатпăр. Хальхи вăхăтра çынсене ĕçпе тивĕçтерекен районти центрта 128 çын учетра тăрать. Ĕççĕррисен шайĕ 0,59 процентпа танлашать. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта 14–18 çулсенчи яшсемпе хĕрсене 189 çынна ĕçлеме ятăмăр, 32 çынна обществăлла ĕçсене явăçтарнă, 11-ĕн професси пĕлĕвĕ илнĕ, шкул ачисен професси ориентацине 1274 вĕренекене явăçтарнă, ĕççĕррисене 10 çынна психологи тĕлĕшпе пулăшу панă.

Ĕççĕррисене, ĕçлеме каяс текенсене çавна пĕлтересшĕн. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикинчи ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби урлă республика тулашĕнчи чылай предприятисене, хуçалăхсене ĕçлеме кайма май пур. Мускав облаçĕпе илес пулсан, «Дубна плюс» ООО, «Рассвет» агрокомплекс» ЗАО, Яхромари аграри колледжĕ, «Московский» агрокомбинат» ЗАО, «Дмитровское» ОАО, «Доброволец» ООО, «Бунятино» агрофирма» ЗАО, кунпа пĕрлех Тюмень облаçĕнчи «Тазагорыбпром» ООО, Волгоград облаçĕнчи «Петрово» СПК (колхоз) тата Мурашева уйрăм предприниматель, Краснодар крайĕнчи «Заря» сиплев центрĕ» ООО кăçалхи иккĕмĕш кварталта çынсене ĕçлеме пыма йыхравлаççĕ.

Çавна каласа хăвармалла. «Тазагорыбпром» тата «Заря» сиплев комплексĕ» предприятисене ĕçлеме каяс текенсене ушкăнсем пухăннине кура Канаш станцийĕнчен ăсатаççĕ. Çул укçине рабочисен хăйсен тӳлемелле. Вĕсемпе малтан Чăваш Республикинчи ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службинче калаçу ирттереççĕ. Кирлĕ документсемпе Шупашкар хулинчи Гагарин урамĕнчи 22 «а» çуртри 123-мĕш пӳлĕме пырас пулать. Ĕçлеме каякансен тухса каяс кун 16 сехетрен кая юлмасăр Шупашкарти ĕçпе тивĕçтерекен центра çитмелле.

Республикăри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службипе килĕшӳ тунă Мускав облаçĕнчи хуçалăхсене механизаторсем, водительсем, газоэлектросварщиксем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, доярккăсем, пахча çимĕç суйлакансем кирлĕ. Специалистсен хăйсемпе пĕрле медицина справкисем, професси илнине çирĕплетекен документсем, налук инспекцийĕнче учета илнин свидетельствисем (ИНН), патшалăх пенси страхованийĕн свидетельствисем пулмалла. Ĕç укçи уйăхне 10–15 пин тенкĕпе танлашать. Рабочисене организацисем шучĕпе илсе каяççĕ.

«Московский» агрокомбинат» предприяти теплицăра май уйăхĕнчен тытăнса сентябрь уйăхĕччен ĕçлеме пахча çимĕç çитĕнтерекенсене, расфасовщицăсене, чечек ӳстерекенсене, КИПиА слесарĕсене, электриксене, электрогазосварщиксене, водительсене кĕтет. Предприяти ĕçлеме пынисене общежитие вырнаçтарать, кунне пĕр хутчен тӳлевсĕр апат çитерет. Ĕçлеме каякансен çак документсем пулмалла: Раççей гражданинĕн прописка́ллă паспорчĕ, пенси страхованийĕн свидетельстви, ĕç кĕнеки (май пур пулсан), вĕреннине ĕнентерекен документ (свидетельство е диплом), медицина амбулаторийĕн картти (хирургăн, куç тухтăрĕн, гинекологăн заключенийĕсем, флюорографи тăни, дифтерирен укол туни пирки паллă туни пулмалла). Ĕç укçи уйăхне 20 пин тенкĕрен тытăнса малалла. Ĕçлеме ушкăнсем пухăнса çитнине кура тухса каймалла, çул укçи – рабочисем шучĕпе.

Ачасен «Заря» сиплев комплексĕ Хура тинĕс хĕрринче питĕ илемлĕ Джубга бухтинче вырнаçнă. Кунта 2008 çулхи сезон вăхăтĕнче ĕçлеме официантсем, чашăк-тирĕк çăвакансем, кухньăра ĕçлекенсем, рабочисем, уборщица, горничнăй, медицина сестри тата санитарка кирлĕ. 45 кунран кая мар (уйрăм тĕслĕхсенче 30 кун) ĕçлеме килĕшекенсенчен пурăннăшăн укçа илмеççĕ, кунне 3 хутчен тӳлевсĕр апат çитереççĕ. Ĕçлекенсемпе ĕç законодательствин тата социаллă страхованин нормисемпе килĕшӳллĕн ĕç килĕшĕвĕ тăваççĕ. Ĕçлеме каяс текенсен Чăваш Республикинчи ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службине ĕç кĕнекин, дипломăн, паспортăн, медицина кĕнекин копийĕсене ярса памалла. Рабочисен вырăна хăйсен шучĕпе каймалла пулать, ушкăнсем пухăнса çитнине кура тухса каяççĕ.

Çапла вара ĕçлеме каяс текенсем валли ĕç вырăнĕсем çук мар. Туллирех информаци илес тесен районти ĕçпе тивĕçтерекен центра та кĕрсе тухма пултаратăр.

В. ШАПОШНИКОВ
каласа́нă.

И.Я.Яковлев çуралнăранпа – 160 çул

Лицеистсем – çĕнтерӳçĕсем

Апрелĕн 6-мĕшĕнче Муркаш лицейĕнче вĕренекенсем Чăваш патшалăх университетĕнче кашни çулах иртекен студентсен наука конференцине хутшăнчĕç. Кăçалхи конференцие И.Я.Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнине халаллана. Унта вара университетăн ытти лицейĕсенчен те хутшăнакансем нумай пулнă. Çапах та пирĕн район çамрăкĕсем хӳтĕленĕ 8 ĕçрен çиччĕшĕ малти вырăнсене йышăннă.

Тĕрлĕ секцисенче 1-мĕш вырăнсене Н.Петровапа Т.Евтихеева (ертӳçи С.И.Рожкова), Д.Дедов (ертӳçи Р.М.Сапожников) тата И.Кузьминапа А.Петрова (ертӳçи Н.В.Казаков) тухма пултарнă. Т.Евтихеева (ертӳçи С.И.Рожкова) тата К.Троицкая (ертӳçи Э.А.Филиппова) хăйсен ĕçĕсемпе 2-мĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ. 3-мĕш вырăнсене М.Сидюшкина (ертӳçи А.Г.Павлов) тата Г.Лукинпа Р.Иванов (ертӳçи А.И.Федоров) тивĕçнĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: лицеистсем киле çĕнтерӳсемпе тавăрăнчĕç.

Н.НИКОЛАЕВА.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Интересли нумай

Шкул вăл пĕлӳ çăл куçĕ кăна мар. Шкул вăл хăйне евĕр çемье пулса тăрать. Çемьери пекех кунта пурте кирлĕ, кашнин хăйĕн вырăнĕ пулмалла. Вĕрентекенсен тĕп тивĕçĕ вара – çитĕнсе пыракан ăрăва малаллахи пурнăçра тĕрĕс çул тупма пулăшасси. Çăмăл ĕç мар вăл, анчах та ырă ĕç.

Шурча шкулне илес пулсан, пирĕн шкулта кашни ача куç умĕнче. Кашнинех эпир сăнпа, ятпа тата мĕнле вĕреннипе кăна мар, мĕнпе интересленнипе те пĕлсех тăратпăр. Çак интерессене шута илсе хамăр шкул ачисене тĕрлĕрен конкурссене хутшăнтаратпăр. Районта сăн ӳкерчĕксен е ӳкерчĕксен, сăвă-калавсен конкурсĕсем Шурча шкулĕнче вĕренекенсем хутшăнмасăр иртмеççĕ. Вĕсене хутшăнатпăр кăна мар, çĕнтерӳçĕсем те пулса тăратпăр. Ку енĕпе пирĕн Ирина Саватеева, Анжелика Кудашова, Александр Степанов, Дарья Борзаева, Дмитрий Тимофеев чи маттуррисем теме пулать. Вĕсем пĕр конкурсран та аякра тăрса юлмаççĕ.

Наукăпа практика конференцийĕсене ирттересси юлашки çулсенче уйрăмах ăнăçуллă ataланать. «Эксильсор–2008» ятпа иртекен районти наукăпа практика конференцине эпир ултă тĕпчев ĕçĕпе хутшăнтăмăр. Ертсе пыраканĕсем Н.М. Тюрина, В.В. Бычкова тата Н.В. Борзаева. Вĕсенчен 2-мĕш класри Дарья Борзаева хатĕрленĕ «Что в имени моем?» ĕç 3-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ. 7-мĕш класри Анастасия Ердукова ĕçĕ вара Шупашкарта иртекен конференцие хутшăнма та тивĕç пулчĕ.

Унсăр пуçне тата районта «Ростки возрождения» ятлă конкурс-вăйă иртрĕ. Çак конкурсăн килти ĕçĕ Н.Я. Бичурин çинчен тĕпчев ĕçĕ хатĕрлесси пулнăччĕ. Ку конкурсра та эпир

çĕнтерӳçĕсем пултăмăр.

Пирĕн шкул ачисен çитĕнĕвĕсем татах нумай. Пурин çинчен çырса та пĕтереймĕн. Чи хакли вара – вĕренекенсемпе вĕрентекенсем пĕтĕм вăя пĕрле пухса ĕçлесе пыни, ашшĕамăшĕсем шкул пурнăçĕпе интереслансех тăни. Пĕрне-пĕри ăнланса, туслăха çирĕплетсе ĕçлесе пырсан кăна пирĕнте ырă кăмăллăх çутă çăл куç пек тапса тăма пултарать.

Н. БОРЗАЕВА,
Шурча шкулĕн аслă вожатăйĕ.

Конкурс

Хăшĕн сочиненийĕ лайăхрах?

Иртнĕ çулсенчи пекех, кăçал та налук пĕлĕвне сарас, налук культурине ӳстерес тĕллевпе федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ шкулсенче 9–11 классенче вĕренекенсем хушшинче сочиненисен конкурсне ирттерет. Унăн темисем: «Налуксем тӳлемелле е тӳлемелле мар?», «Налуксем общество пурнăçĕнче», «Эпĕ – пулас налук тӳлекен», «Налук инспекторĕ пулас тетĕп, мĕншĕн тесен...».

Конкурса тăратакан материала уйрăм вĕренекенĕн хăйĕн пĕччен çырмалла, ушкăнпа çырнă сочиненисене пăхса тухмаççĕ. Сочинени калăпăшĕ титул листине шутламасăр 5 страница пичет текстчĕ чухлĕ пулмалла (полясем: сулахăйри, çӳлти тата аялти – 20 мм, сылтăмри – 10 мм; шрифчĕ – 12 Times New Roman), алăпа çырнă текст 10 страница таран. Конкурс итогĕсене майăн 12-мĕшĕнче пĕтĕмлетеççĕ, пултаруллисене хаклă парнесем кĕтеççĕ.

Сочиненисене çак адреспа илсе пымалла: 429530, Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 4-мĕш çурт, налук инспекцийĕн налук тӳлекенсемпе, вĕсене регистрацилессипе тата учета илессипе ĕçлекен пайĕ.